4 тапхăр Ачасен ăнланăвĕсемпе хăнăхăвĕсене çирĕплетни	
Тĕллев	Урокра курни-илтнине пĕтĕмлетесси.
Вăхăчĕ	5 минут
Вĕренекенсен ĕçĕ:	Кластер, синквейн тăвасси.
Вĕрентӳ меслечĕ:	Учитель тĕрĕслевĕ, шутлав
Вĕрентекен ĕçĕ:	Мĕн тумаллине кăтартса пырасси
ИКТпа усă курни	Презентаци (10-17 слайд) Ваттисен сăмахĕсем
Тĕллев	Илемлĕ пуплеве якатасси
Вăхăчĕ	13 минут
Вĕренекенсен ĕçĕ:	Викторина, ӳкерчĕк.
Вĕрентӳ меслечĕ:	Шырав
Вĕрентекен ĕçĕ:	Мĕн тумаллине кăтартса пырасси
Çак тапхăрти тĕрĕслев	Синквейн, кластер, фишбоун тăвасси.
5 тапхăр Киле ĕç пани	Презентаци (20 слайд) **3 тĕрлĕ киле ĕç:** 1."Кукамай" калав тăрăх сюжетлă ӳкерчĕксем тумалла. 2. Хăвăрăн кукамăр,асаннĕр çинчен сочинени, сăвă çырса килĕр, видеоклип ӳкерĕр.(суйласа илнĕ тăрăх) 3. Напишите сочинение о поступке, который вы никогда больше не совершите.
Вĕренекенсен ĕçĕ:	Дневниксене çырасси
6 тапхăр Урока пĕтĕмлетни	Презентаци (21 слайд) (1-2 мин)
Вĕрентекен ĕçĕ: Паянхи темăна мĕнле ăнланнине тĕрĕслесси. Пĕтĕмлетӳ тăвасси. Ачасен ĕçне хакласси.	
Вĕренекенсен ĕçĕ:	Ыйтусене хуравласси

Васильева Наталия Михайловна,
Вăрнар районĕнчи Кӳстӳмĕрти
вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен

ЭПИР ЧĂВАШ АЧИСЕМ
(чăваш чĕлхи кунне халалланă класс тулашĕнчи мероприяти)

«Эпир чăваш ачисем» класс тулашĕнчи мероприятие чăваш чĕлхи кунне халалланă. Мероприятие 1-мĕш тата 2-мĕш класра вĕренекенсемпе ирттерме пулать. Унсăр пуçне ку мероприяти «Литература вулавĕ» урокĕсенче чăвашлăх çинчен калакан хайлавсене аса илсе пĕтĕмлетме май парать.

Тĕллевĕсем:

1. Ачасене чăваш халăх тумĕпе паллаштарасси.
2. Чăваш халăхĕн чĕлхе илемлĕхне, вăййисен асамлăхне уçса парасси.
3. Пурте пĕрле ĕçлесе сăвă калас, юрлас-ташлас ăсталăха аталантарасси.

Кирлĕ хатĕрсем: чăваш тумĕ çинчен калакан слайдсем; чăваш тумне тăхăннă пукане, хут пуканесем; сăрăсем; юрăсен дискĕ, интернет-ресурс.

Уяв йĕрки

Вĕренекен: (*чăваш тумĕ тăхăннă хĕр ача*).
Пĕррехинче каçхине
Ырă чунлă асанне
Уçрĕ те шур арчине
Чĕнчĕ мана хăй патне.

Кĕмĕл тевет, мăй çыххи,
Тухья, сурпан, пиçиххи
Шурă сатин кĕпесем,
сарă хитре саппунсем.
Çаксене йăлт асанне
Пачĕ мана – мăнукне.

Вĕрентекен: Пулчĕ тăчĕ Илемпи, / Тен, Пинерпи, тен, Нарспи. / Кам пĕлет-ши, ачасем, / Мĕнле сирĕн шухăшсем?

Ачасем хуравлаççĕ. (Пукане, хĕр ача, Валя ...).

Вĕрентекен: Аван-аван, ачасем! Валя паян чăваш тумĕпе. Хăйĕн тусĕ пуканепе. (*Вĕрентекен ачана чăваш тумĕ тăхăннă пукане тыттарать)*

Вĕрентекен: – Ачасем, парта хушшинчен тухса ман пата килĕр-ха. (А*часем вĕрентекен тавра пуçтарăнса тăраççĕ*). Мĕншĕн эпĕ çакăн пек пукане илсе килтĕм, Валя та шкул тумĕпе мар? *(Ачасем хуравлаççĕ).*

Вĕрентекен: – Паян тĕлĕнмелле кун. Сирĕн пек ачасем пурте чăваш çĕршывĕ çинчен, чăваш сăвви-юрри, сăмахĕ, вăййи-кулли çинчен калаçаççĕ. Паян чăваш чĕлхи кунĕ. Эпир Чăваш Енре пурăнатпăр. Пирĕншĕн тăван, чи хаклă, чи çывăх чĕлхе – чăваш чĕлхи. Апла пулсан паянхи уяв – пирĕн уяв.

Вĕренекен: -Эпир камсем? Чăвашсем!
Калаçатпăр чăвашла,
Сăвăлатпăр чăвашла.

1-мĕш сăвă калакан ача: Чăвашла эп калаçатăп,
Вĕренетĕп чăвашла,
Аннене савăнтаратăп
Эпĕ кунсерен çапла.

Сăвă калакан 2- мĕш ача: Кăмăл пур чухне ташлатăп,
Çаптаратăп саккăрла,
Таврана янраттаратăп
Чăвашла юрла-юрла.

Сăвă калакан 3-мĕш ача: Эп чăваш ачи, саватăп
Хамăрăн чăваш çĕрне.
Вăл кипке те ман, сăпка та
Ăна манмăп ĕмĕрне.

Сăвă калакан 4-мĕш ача: Эп чăваш ачи саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене
Юратап сăвва, юрра та
Купăса та кĕслене.

Вĕренекен: Эпир камсем? / Чăвашсем! / Сăвăлатпăр чăвашла, / Юр юрлатпăр чăвашла.

(А*часен ушкăнĕ Н. Ыдарайăн «Чăваш ачи» сăввипе кĕвĕлене юрра юрлать).*

Чăваш ачи чăвашах –
Чунĕ ĕçре яланах.
Пĕр çул хушши сăпкара
Пиеленсе пиçĕхет.
Ик çул хушши вăйăра
Ирĕкленсе çитĕнет.
Виçĕ çула çитсессĕн
Витре йăтма вĕренет.
Тăват çула çитсессĕн
Тукмак тытма тĕлленет.
Пилĕк çула çитсессĕн
Пилĕк авма сĕмленет.
Ултă çула çитсессĕн

Уя тухса вĕçтерет.

Вĕренекен: Эпир камсем? Чăвашсем! Юр юрлатпăр чăвашла, Вăй вылятпăр чăвашла.

(Ачасем вăйă картине тăраççĕ).

Ертсе пыракан ача: Вĕт вĕлтĕрен хушшинче
Сарă кайăк чĕппи пур,
Эс те чипер, вăл та чипер,
Чăн чиперри, сик те тух!

(Суйласа илнĕ ача вăйă картинче ларать, ыттисем сăвă каласа çаврăнаççĕ. Сăвă каласа пĕтерсен, çаврăнма чарăнаççĕ. Пĕр ачи хыçалтан пырса арçын ачан куçне хуплать. Куç хуплаканнин ятне тĕрĕс каласан, Рома вăйă картине тăрать. Тĕрĕс каламасан «Пукане» юрра юрлать.)

Ачасем: Ларать, ларать, Рома ларать
Шĕшкĕ тĕмĕ айĕнче.
Çиет, çиет, Рома çиет
Шĕшкĕн сарă мăйăрне.
Вăхăт çитсен, тăрас пулать,
Ятне тĕрĕс калас пулать.

Вĕренекен: Эпир камсем? / Чăвашсем! / Вăй вылятпăр чăвашла, / Таш ташлатпăр чăвашла.

(Ачасем «Чăваш ачисем» юрăпа ташă ташлаççĕ. Ташă кĕввине интернетран илнĕ.)

Вĕрентекен: - Маттур, ачасем. Чăваш халăхĕ – ĕçчен халăх. Мĕн авалтан вăл пĕр – пĕрне пулăшса ĕçлесе пурăннă. Айтăр эпир чăн чăвашсем пулса, пурте пĕрле пухăнса çак илемлĕ пуканесен тумĕсене чăваш тĕррисемпе илемлетер. Тĕрĕ вăл – чăвашсен авалхи искусстви. Чăвашсен тĕрри – чăвашсен çырулăхĕ. Тĕрре шурă пир çине тунă. Шурă тĕс – çутă кун, тасалăх. Хура тĕс – çĕр тĕсĕ, халăх вăйĕ. Хĕрлĕ тĕс – пурнăç, ĕç. Сарă тĕс – хĕвел, савăнăç, телей.

(Вĕрентекен ачасене слайд çинче чăваш тумĕ тăхăннă пуканесене кăтартса илет. Г. Иванов-Орковăн «Узоры, цвет, символика» кĕнекерен чăваш тумĕ тăхăннă пуканесене пăхтарать.)

Вĕрентекен: – Ачасем, икĕ ушкăна уйрăлса пуканесем валли илемлĕ тум хатĕрлер-ха.

Вĕренекен: Эпир камсем? / Чăвашсем! / Вăй вылятпăр чăвашла, / Таш ташлатпăр чăвашла.

(Ачасем икĕ ушкăна пайланса хут пуканесем валли илемлĕ тум хатĕрлеççĕ. Ушкăнра ачасен тухья, тевет, мерчен, кĕпе, саппун сăрласа илемлетмелле.)

Вĕрентекен: – Ачасем, аван. Хамăр чăваш пулнине паян юрласа та, ташласа та, ĕçлесе те çирĕплетрĕмĕр. Пурте пĕрле «Пахчи-пахчи» юрра шăрантарса паянхи уява вĕçлĕпĕр.

1) Пахчи-пахчи, çĕмĕрт пахчи, / çĕмĕрт çисе ӳсрĕмĕр. / Эх, ӳсрĕмĕр, / çавăнпа хура пултăмăр.

2) Пахчи-пахчи, мăйăр пахчи, / Мăйăр çисе ӳсрĕмĕр. / Эх, ӳсрĕмĕр, / çавăнпа сарă пултăмăр.

3) Пахчи-пахчи, çырла пахчи, / çырла çисе ӳсрĕмĕр. / Эх, ӳсрĕмĕр, / çавăнпа маттур пултăмăр.

Вĕренекен: Эпир камсем? / Чăвашсем! / Вăй вылятпăр чăвашла, / Таш ташлатпăр чăвашла.

Вĕрентекен: – Пурне те пысăк тав. Хамăр чăваш пулнине манар мар. Тăван чĕлхене пĕтме парар мар!